К84.09(=Чув)
К27
4-426889

# Марина КАРЯГИНА



Национальная библиотека ЧР
4-042689



Шупашкар. «Пăлхар»
1995





Кур К 84.09(=Чув)
К 27

## Марина
# КАРЯГИНА

# ХУМ ПĂШĂЛТАТĂВĔ

*сăвăсем*

*Художникĕ*
Николай
Мордяков

Кр

ББК 84 Чув 7-5
К 21

Канюкова Е. В

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

2 экз

ПРОВЕРЕНО
28 СЕН 2017
2010

**Карягина М. Ф.**

К 21 Хум пăшăлтатăвĕ. Сăвăсем. Художникĕ Н. Мордяков.— Шупашкар: П-п «Пăлхар». 1995.—128 с.

Марина Карягинăн чăваш поэзийĕнчи хăйне евĕр уçăмлă, çепĕç, пысăк туйăмлă сассине çак кĕнекене вуласан пĕлме пултаратăр.

**ББК 84 Чув 7-5**

**К** $\frac{\mathbf{4803710202-8}}{\mathbf{M\ 136(03)-95}}$ **—95**

**ISBN 5-7670-0924-4**
© «Пăлхар», 1995 ç.

4-42689

# Эс çук та— ним те çук...

* * *

Шăпам санран тартать пулсассăн,
Сукмак шырамăп сан патна.
Ҫуҫҫуль тăкса сывламăп ассăн,
Хĕрӳллĕн асăнмăп ятна.

Ан тив, чуна çурса янратăр
Алри гитара ян та ян!
Сан чĕнĕвне çĕнсе хуплатăр —
Ёнерхи кун килмест паян.

Шăпам санран тартать пулсассăн,
Ман хамăн çул, эс ан кулян.
Кĕрлет гитара çирĕп саслăн:
Ёнерхи кун килмест паян.

Шăпам санран тартать пулсассăн,
Сукмак шырамăп сан патна.
Ҫуҫҫуль тăкса сывламăп ассăн,
Хĕрӳллĕн асăнмăп ятна.

*1988 ç.*

## Кил ман пата, чун савниҫӗм

паян кунччен — пӗччен,
ҪИЛмерӗн МАН ПАТА.
пуш-пушӑ ЧУНӑм хӑтлӑхне ҫухатрӗ.
САспах ӳлет пек ҫыВӑхри ката,
ыр ӗмӗте ҫак каҫ тухатрӗ.
шур ҫеҫкеНе тата-тата,
чӗрем ӳпкев ҫуратрӗ,
ҫак ҫӗрлехИ сада
куҫҪуль ҫутатрӗ,
пЁр турата
ҫил татрӗ —
Малта...

*1989 ҫ.*

* * *

Инди фильмĕсенчи юрату асамне
ăмсанса киленместĕп.
Сурхури каçĕнче Сан сăну тĕкĕрте куласса
ĕненместĕп.
Юмахри паттăр пек çăлтăр куçлă та мар эс,
хура йăлтăр куçлă,
Кăлкан мар-тăр çӳçӳ, сăмала пек хура
çӳçлинех, тен, эп куçлăп.

«Юратать, юратмасть...»— таткаламăп
салтак тӳмине — усси пулмĕ,
Пурăнас çеçкене тĕк тăмалăх,
чĕмне вăрласа, вилĕм кӳмĕп.
Тур пӳрни, ăраскалăм пулсан,
хăй килет, тет, вăл çенĕк вĕçне.
Шанчăкпа хĕмленсе эп упрап çамрăк хĕрĕн
таса тивĕçне.

*1989 ç.*

* * *

Авăнать шур хурăн, авăтать куккук,
Эп сана саватăп, эсĕ мана — çук.
Юнашар утатпăр: иккĕн — ик çулпа,
Куккукран килет пек санпа ман шăпа.

«Хăçанччен-ши кĕтĕп?»— ыйтрăм
куккукран.
Авăтмарĕ урăх... Чĕрере — суран.
Эс сивлеккĕн култăн, пăр пекех куçу,
Ах, тинех ăнлантăм: малалла çул çук.

Сурана пăхмасăр, пухрăм та вăй-хал,
Ыр сунсах ăсатрăм, култăм, султăм ал.
Çĕн сукмак шырарăм пĕчченех темччен,
Вăрманпа калаçрăм çут тĕнче çинчен.

«Ман пекех вăл пурнăç, пурнăç —
сĕм вăрман,
Халиччен никам та хурсăр пурăнман...»
Чăтлăхлă вăрман-мĕн чăннипех—тĕмен:
Аякра сассу сан, эс мана чĕнен.

Акшарпа та чупрăм, ашрăм шурлăхра,
Пулăшма васкатăп: эс — хăрушлăхра.

Йалӑнса тинкертӗн, куҫунта — вучах,
Ман куҫра — шеллев те ырату анчах.

Чӑтлӑхра хӑвармӑп йывӑр чух сана,
Ӑнланса ҫеҫ илччӗ: кӑткӑс самана.
Чир-чӗрне эп сиплӗп — чухӑн мар вӑрман,
Чӗрери сураншӑн эмел ҫук халь ман.

Қаярах ӑнлантӑн: урӑх малашне
Тӑр-пӗччен хӑвармӑн сӗм вӑрман ӑшне...
Авӑнать шур хурӑн, авӑтать куккук,
Эс мана саватӑн, эпӗ сана — ҫук.

*1989 ç.*

* * *

Ман сăвва ăнланмастăн пулсан,
кай кунтан.
Сăввăмсем ахальтен çуралман:
эс — савман.

Иртсе кайнă асап — хут çинче,
чун çинче.
Тĕлĕнтермĕш те чĕмсĕр тĕнче —
мал енче.

Макăрмастăп, кулмастăп, куран:
чун — чултан.
Иртнине хӳсе кайнă таман —
шур тусан.

Тем сиссе пăшăлтатрĕ йăмра.
Эс — умра.
Пуласси те, иртни те сăнра,
сăввăмра.

Ман сăвва ăнланмастăн пулсан,
кай кунтан.
Чул чунран шăтса тухрĕ—йăпан—
чĕр тюльпан...

*1989 ç.*

* * *

Шутарса чӳрече каркăçне,
пӳлĕме тĕксĕм хăтлăх кӳретĕп.
Юлашки юрату куççульне
çăлтăрсем курасран шикленетĕп.

Асапа ăнланас пек çурта
манпа тан куççульпе ĕсĕклерĕ.
Çул çухатнă этем-ши тулта
кантăк умĕн пĕр сассăр çӳрерĕ?

Юрату ĕмĕлки-ши темччен
уйрăлма хăяймасăр тертленчĕ?
Юлашки хут эс кайнă енче
куç курми шухă тăвăл çĕкленчĕ.

Шутарса чӳрече каркăçне
пӳлĕме тĕксĕм хăтлăх кӳретĕп.
Сӳнтерсе шур çурта çулăмне
чĕрери çулăмпа кĕрешетĕп.

*1989 ç.*



* * *

Шурă хăйăрлă Атăл хĕрри.
Чĕрери çулăмпах-ши пĕри
Çырса хунă чĕрсе (ах, чарусăр!):
«Пурнăçа пĕлес çук юратусăр».
Нӳрлĕ хăйăр çинчи сăмахсем...
Çырана асамлатнă вĕсем.
Нихăçан çухалмассăн, хитрен
Курăнаççĕ мана инçетрен.
Тĕрлĕрен çав, чăнах та, тĕмен,
Улшăну пуласса та кĕтмен.
Хум килсе саналарĕ «ю»-не,
Туйăм ларчĕ ытла та йӳне.
Пушă юлнă çав «ю» вырăнне
Çыртăм «ы», аптăранă енне.
(Мĕн иртни яланах таврăнусăр):
«Пурнăçа пĕлес çук ыратусăр.»

*1989 ç.*

* * *

Шухăшласа кăлартăм пулĕ
Сан хӳхĕм сăнарна
Çак майсăр арпашулăхра
Чуна лăплантарма.
Ултавлă курăну йăл кулĕ —
Йăпатĕ пĕр кана.
Вĕренĕп хитремарлăхра
Суя илем курма...
Шухăшласа кăлартăм пулĕ
Сан çутă сăнарна.
Эс кăмăл ту, эс килĕш тулĕк
Ман çăлăнăç пулма.

*1990 ç.*

* * *

Ан шыра мана — тупаймăн,
Ăшунта ыр пурнăç сун.
Хитре мар çынра пытаннă
Ман ачаш, ытарлă чун...

Ан шыра мана — тупаймăн,
Тур çырни пулать тата.
Ахальтен-им эп вăтаннăн
Куçăма санран тартап...

Ан шыра мана — тупаймăн,
Қам куçран пăхмасть — сăна.
Хальхинче вара сăпайлăн
Қăшт кулса ăсат кăна.

*1990 ç.*

* * *

Аран кунлатăп кун, çĕре çĕрлетĕп,
Ларатăп пур тĕнче çинчен манса.
Е çĕр хута пĕр шанчăксăр кĕтетĕп
Кусран пăхса телейĕм куласса.
Суйса хăвар-ха «килĕп, кĕт» тесе,
Е виç сăмах хăвар та тĕрлесе —
Йăпанăп сăмахна аса илсе.

*1990 ç.*



Ч-42689
НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

* * *

Кичем...
Сан куçусем калаçнине туяс килет.
Килсем,
Ман чĕрере чăн юрату, тен, йăл илет.
Пĕччен
Куççулĕ типиччен ӳксе йĕрес килет.
Ирччен
Тăм савăтри çеçке те сарăмсăр вилет.

*1990 ç.*

* * *

Сана кӗтни—тен, кӗтенҫи пулни кӑна,
Савас тени—тен, ҫырлахас тени кӑна.
Туту, пӑшӑлтатса, темскер каласшӑн,
Сукмак вӗҫсӗрлӗхе илсе каясшӑн.

Юнашарри—эс мар, тен, ӗмӗлкӳ кӑна.
Пӑлханчӑк сӑмахсем, тен, туйӑнни кӑна.
Ҫут тӗнчене манса, хумсем выляҫҫӗ,
Шур акӑшсем шур ҫунатне сулаҫҫӗ.

Санпа чухне йӗни—хама суйни кӑна,
Кӳрененҫи пулни — савас килни кӑна.
Туятӑн-и, куҫ хупанки чӗтренчӗк,
Пылак куҫҫуль хӑюсӑр та именчӗк.

Сана кӗтни—тен, кӗтенҫи пулни кӑна,
Савап тени — тен, саванҫи пулни кӑна...
Куратӑн-и, юр пӗрчисем кулаҫҫӗ,
Тӑм тивнӗ чечексем ҫеҫке ҫураҫҫӗ.

*1990 ҫ.*

* * *

«Увези меня за горизонт!»

*Марина Цветаева*

Çěрпе пěлěт пěрлешнě енне
Вěçсе çитěттěм, касăттăм алăк.
Илсе кай горизонт леш енне,
Илсе кай, унта урăх çанталăк!

Çăлăнасчě çак ирсěр çěртен,
Чунсене çăтмахра тасатасчě.
Çěнě пурнăç туса кěçěртен,
Пирěшти пек таса пурăнасчě...

Кăлăхах йăлăнатăп иккен.
Тӳпене çěкленмешкěн пире
Пӳрменех-тěр телей кӳрекен:
Этемсем пурăнаççě пěрле.

*1990 ç.*

* * *

Эс çук та — ним те çук.
Тĕтре, тĕтре...
Суранлă туйăмсем ытла măран.
Пĕрре эс вилтĕн манăн тĕлĕкре,
Куççуль çăтса вăрантăм ыйхăран.

Анчах эс пулăн. Пулнă. Пурăнан.
Кулатăн, култаратăн такама,
Тен, тĕкĕр ывăнчĕ сăна-сăна...
Эп хатĕр халь ăна та ăмсанма.

Пĕр хускану тума та халăм çук,
Сассу анчах пултарĕ чĕм кӳме.
Туйăмсăрланнă шухăшсăр куçу
Пулас пек маншăн йĕплĕ чул хӳме.

Эс çук та — ним те çук.
Шап-шур тĕтре...
Асапланса вилеççĕ туйăмсем.
Йĕпхӳ кĕввиллĕ тĕссĕр пĕлĕтре
Вĕçсе иртеççĕ çассăр кайăксем.

*1990 ç.*

* * *

Шур уйăх шуратрĕ сăна,
Пачах куç хупман çĕрĕпе.
Хускалчĕ салхуллăн кăна
Чаршавăм çинчи шерепе.

Ултав улăштарчĕ мана —
Паян эп хура кĕпепе.
Çĕркаç тунсăхри хулана
Хĕвел ачашлать шевлипе...

*1990 ç.*

* * *

Асаплă-çке çак шăплăхшăн юрру,
Туймастăн-им, мăнтарăн сарă кайăк?
Тĕнчем, ăçта сан çылăхсăр Турру?!
Никам та çук. Ытла та тунсăх. Лайăх!

Куçран-куçа юлатпăр шăплăхпа.
Шăп иккĕн çеç никам илтми пуплетпĕр.
Мана эс, шăплăх, тутлă канлĕх пар,
Сана чĕре уççи парнелĕп эпĕ.

Чун тĕкĕрĕ, чăнах та, эс кăна.
Кунта чухне ытарлăхсăр-мĕн эпĕ.
Тен, пулăп саншăн яланхи хăна,
Никам ăнланайми пулсан — килетĕп.

*1990 ç.*

* * *

Пачах шел мар пулсан,
Кив ёмĕте çилпе салат.
Куççулĕпе кулсан,
Мана, кур, тĕкĕр те сават.

Каях шел мар пулсан —
Пĕччен эп, эсĕ те хăрах.
Асаилӳ кăна юлсан,
Сăввăмсене вута пăрах.

Тен, ташлăп çаруран
Кăвар çинче — ăсран кайсан.
«Эп йӳн каçаруран»,—
Теменччĕ-и эсех тахçан?

*1990 ç.*

* * *

Мĕне кура мана юратăн?
Юлташ та тунсăхăм кăна.
Ал сĕлтрĕм те — тăрса юлатăн,
Инçетлĕхе сăна-сăна.

Инçетлĕхре куратăн ахăр
Пĕрремĕш хут эп килнине.
Пуçне ухать салхуллă кахăр...
Чарлан çухатнă мăшăрне...

Асилӳре анчах-тăр савăк,
Ан ӳкĕтле хитрен кулма.
Чĕнмесĕр тăрăп та пĕр авăк —
Вĕренĕн чĕмсĕррĕн юлма.

*1990 ç.*

* * *

Выля, выля, çилленчĕк çил,
Ула, ула.
Тертпе çунать пĕр вутпуççи —
Кула-кула.
Кулли суранлă та йăваш,
Куççуллĕ те.
Чунпа илтсен — ытла ачаш,
Çу çилĕ пек.
Ирех хĕрелчĕ кĕр çулçи
Ăна кура.
Тертпе çунать пĕр вутпуççи
Кула-кула...

*1990 ç.*

* * *

Хум чуптурĕ çыран хĕррине,
Шăпăртах шăпăрланнă сар эрĕм.
Юлашки юрату юррине
Юратусăр каçа парнелерĕм.

Сывлăша çавăратăп аран.
Халь пĕр туйăмсăр, лăпкă çанталăк.
Шурă кăпăк — шур аркă таран.
Аркăма хум чӳхерĕ пĕр авăк.

Ӳпкелеш, ятласах-тăк, ятла,
Юрату та вилмест пуль сăлтавсăр.
Шыв çине чĕркелетĕп ятна,
Çырăнмасăр çĕтет вăл пĕр шавсăр.

*1990 ç.*

* * *

Асап ан кӳр гитара хӗлӗхне,
Асап ан кӳр. Тархасшăн...
Текех пыраймăп санăн тӗлӗкне,
Эп халь пӗччен пуласшăн.

Тавралăх та çухатрӗ тимлӗхне,
Чӗтрет яштак хăвалăх.
Саспах пӗрре чун тăвăннă енне
Йӗресчӗ лăпланмалăх.

Утаç утта пӗлеймӗн хăш чухне:
Тӗнче — пуçватмăш шахмат.
Эп маннă халăх йăлине, чӳкне,
Çӗре ӳксе пуç çапмăп.

Текех çук юратун çук пӳлӗхне...
Гитара тем каласшăн.
Асап ан кӳр гитара хӗлӗхне,
Асап ан кӳр. Тархасшăн.

*1990 ç.*

* * *

Ман сан валли пур урăх кулă,
Вĕр-çĕнĕ сасă, сăмахсем...
Халь ним пулман пек шăпăрт юлăп,
Ҫала чăн пулнă юмахсем.

Сăмах чĕнме хăратăп темшĕн.
Чĕрем вĕреннĕ хĕн курма.
Эп хатĕрччĕ çумри этемшĕн
Кулас килмесĕр йăл кулма.

Юратупа юратумарлăх...
Чуна уçни халь ытлашши.
Куратăн-и, епле ытарлă
Юр пĕрчисен ахаль ташши.

*1990 ç.*

* * *

Паян — аван. Шăпах ман кăмăл кунĕ.
Тăман тухса тустарчĕ куç курми.
Улмуççисем йĕме те маннă пулĕ,
Çĕре пашлатрĕ тăлăх панулми.

Ан тив, ман кантăка хĕл çилĕ каттăр,
Хуçа пулса алхастăр вăл кĕрсе!
Сан кăмăлна пăсса тăман тухать-тăр,
Хĕвел пăхать мана кӳрентерсе.

Улмуççисем йĕме те маннă пулĕ,
Çĕре пашлатрĕ тăлăх панулми...
Çĕр каçипе тăман айваннăн кулĕ,
Пĕр маншăнах-и хӳхлĕ чарăнми...

*1990 ç.*

* * *

Чĕтренчĕклĕ сассу ытла салху,
Манра — сăмахсăр кĕвĕ пурăнать.
Тĕттĕмлĕхре тĕтреллĕ ĕмĕлкӳ
Çитмен телей пек хурлă курăнать.

Эп çырăп юратусăр çырусем,
Юратманран тухать пылак куççуль.
Санран эп йышăннă каçарусем
Именнипе ырса лăпланчĕç пуль.

Сăмахусем кĕвве килтересрен
Умри утас ик утăм хăтарать.
Кĕвви çырăнаймасăр вилесрен
Чĕрем хăй асапне хăй пытарать.

*1990 ç.*

* * *

Туйăнать кăна пуль, туйăнать кăна:
Алăкран шаккарĕ манăçнă хăна.
Питĕнче — ачашлăх, вăрттăн вăтану,
Ҫантăкра — çÿçенчĕк çулçăтăкăну.

«Эп савман. Саваймăп. Ĕнтĕ сывă юл...
Ҫумăр çурĕ, çурĕ — шывпа хутăш юр.
Куçăмран пăхатчĕ шухăшсăр тĕнче,
Шăппăн ĕсĕклерĕм... каç ытамĕнче.

Манăçу сăмахĕ манăçман пулсан,
Юлташ мар çынна эп хам тăшман тум
Туйăнать кăна пуль, туйăнать кăна,
Эс паян чăнах та вăхăтсăр хăна.

Куççуле çăтам-и, кулнă пек тăвам:
Йăл кулсан çич ют та — инçетри тăва
Тухман çын тухсассăн... вăйлă тăмана
Туйăнать кăна пуль, туйăнать кăна.

*1990 ç.*

* * *

Кай кунтан. Ытла асаплă куçунтан пăхма.
Эп пĕлмен, çаплах ансат-им ухмаха тухма.
Ман пĕччен пулас килетчĕ ним те çук
çĕрте.
Эпĕ суккăр... Эп хăлхасăр...
Эп чĕлхесĕр те...

Çиçĕм çиçкĕнчĕкĕ витĕр çăлтăр пăхнăçем
Кантăка савса йĕреççĕ халсăр тумламсем.
Эп курмастăп. Эп илтместĕп.
Эп чĕнместĕп тек.
Эпĕ суккăр. Эп хăлхасăр.
Эп чĕлхесĕр те...

Шăпăрт-шăпăрт. Шурă-шурă...
Шурă-шурă юр.
Тĕнчере кирек хăçан та тĕлĕнтермĕш пур.
Ахалех куçа тартатăп эп паян, ахаль—
Эс те суккăр... Эс хăлхасăр...
Эс чĕлхесĕр халь.

*1990 ç.*

* * *

Ҫам пултăн эсё, хăш утравран?
Тĕлĕк пек хăвăрт иртрĕн умран.
Эп-и? Ҫунти. Ҫапла, кунтанах.
Тусăм? Ҫунатлă шур урхамах.

Анланмасассăн — кай, тĕлĕнех:
Юлăп яланлăх хам тĕллĕнех.
Пулмĕ никам та чун уҫмалли,
Вăрттăн кăтартăп виҫ саспалли.

(Санăн чи савнă шеп кĕтесӳ)
Ҫантăк тарланă: «Э те эС, Ю...»
«Эпĕ Сана Юратнă»,— вула.
Ҫулҫă тăкать куҫҫуллĕ хула...

Ҫам пулчĕ ҫавă, хăш утравран?
Тĕлĕк пек хăвăрт иртрĕ умран.
Эх, ҫилҫунатăм, вутлă чĕрчун,
Пĕр санпа ҫеҫ йăпанĕ-тĕр чун.

*1990 ç.*


эсю

* * *

Мана аса илсен —
Çула тухма пуçтарăн.
Манас марах тесен —
Килне пачах ан таврăн.

Эп пырăп шухăшна,
Юррун çуначĕ пулăп.
Вут хурăп та ăшна,
Ăстиçукла йăл кулăп.

Алхасăп çӳçӳпе,
Айван куççуль юхтарăп.
Терт кӳрĕп кунĕпе,
Асамлăп та — хам тарăп.

Тархасшăн, ан ылхан:
Чĕрем çапла савасшăн.
Çаран çинчи кăлкан
Кăкру çинче пуласшăн.

Пуçне усать пиçен,
Именчĕ пуль, мăнтарăн...
Мана аса илсен,
Çула тухма пуçтарăн.

*1990 ç.*

* * *

Маншăн çавах: эс килни, килменни.
Ҫанăçлăха ахалех ан вăрла.
Эсĕччĕ пуль «сывă пул» текенни,
Мĕншĕн тата урăхла хыпарлан?

Хамăн пуянлăх ман — эс пĕлменни:
Пур вăранман туйăмсем чĕрере.
Ҫак пурнăçра, тен, сана пӳрменни
Ман сан валли те çитет ĕмĕре.

Ак — ярайман çырусенĕн тĕрки.
Парăп ăна вут-кăвар мăшкăлне.
Вăхăтăн, кур, улшăнми кун йĕрки —
Юр ӳккелет ешĕл курăк çине...

*1990 ç.*

* * *

Çурма тĕттĕм пӳлĕм,
Çурма тĕттĕм каç...
Нихăçан та ӳлĕм
Шăппăн ан калаç.
Ма йĕместĕн эсĕ,
Ма кулмастăн хуть?
Чарăнма пĕлмесĕр
Кулăп пĕреххут.
Тен, умри этемшĕн
Кулмăп-и, каçар.
Кăмăллатăп темшĕн
Çисĕмлĕ каçа...
Çук, кулмарăн эсĕ...
Макăрмарăн та,
Нимĕн чĕнеймесĕр
Хытрăн вырăнта.
Çурма тĕттĕм пӳлĕм,
Çурма тĕттĕм каç.
Сывпуллашас умĕн
Шăппăн ан калаç...

*1990 ç.*

* * *

Ахальпе ахаль мар кунӑмсен черетне
Мӗнле кирлӗ —
çапла улӑштар.
Сан патна çырӑнман çырусем çӳретме
Эп ыран та, ӗнен, хирӗç мар.

Эсӗ туйнӑ çилсен варкӑшне шыраса
Эп çӳрем никама паллами.
Халь каçсем пӑрланни —
чӑннипех шӑнтасса,
Шӑнтасса —
эсӗ тем калани.

Йывӑçсем — шакла пуçлӑ, айван,
кулӑшла,
Сар кӑтри — эп курса шелleme —
Сапаланнӑ çӗре тем кирли каласла
Е ахаль... юлашки хут йӗме.

Шӑннӑ тӗм куççульне ӑнланасшӑн кӑна
Эп ларам чӗркуççийӗм çине.
Ним пулман пек тӳлеккӗн пӗлтерчӗç
мана
Ку йӑлтах кӗркунне ятлине.

Эп пĕлмен пĕлтĕрхи асилӳ юласса:
Ҫăлкуҫсен куҫĕсем — кĕленче...
Эсĕ туйнă ҫилсен варкăшне шыраса
Ҫĕр ҫĕрлем кĕркунне чĕрҫинче.

*1991 ҫ.*

* * *

Чӳрече пӑрланнӑ... Чӳрече пӑрланнӑ...
Урамра — тӑм тивнӗ сарӑ кӗркунне.
Паянччен мӗн пулнӑ — пӗтӗмпех арканнӑ
Ҫам пӗлет пӑрланнӑ кӗркунне мӗнне?

Ҫӑмӑлттай халь эсӗ, хӑлӑхсӑр ача пек.
Ху темме кичемччӗ, шӑпчӗ иртнинче.
Шӑннӑ икӗ ҫулҫӑ... ик чӗре асапӗ...
Ҫалаҫар-и сассӑр ҫак тӗнче ҫинчен?

Паянтан эп саншӑн йӑл кулма та манӑп,
Паянтан эп пулӑп ахалли кӑна.
Усӑлать-и алӑк, хупӑнать-и алӑк —
Ним пулман пек шӑппӑн ӑсатам сана.

Чӳрече пӑрланнӑ. Чӳрече пӑрланнӑ...
Ҫуллине ҫӑтаҫҫӗ шӑннӑ ҫулҫӑсем.
Манӑн макӑрас-и? Макӑрма та маннӑ.
Пӗр чӗнми тӑрас-и: шӑннӑ ҫулҫӑсем...

*1991 ҫ.*

* * *

Ҫавак кантӑк куҫне йӗпетсе,
Шӗпӗр-шӗпӗр саспа ҫуса иртрӗ вӗт ҫумӑр.
Мӗн тӑран тӗнчерен тӗлӗнсе?—
Ҫумӑрсем кӗрсерен чарӑнмасӑр та ҫунӑ.

Пӗр самант манӑҫам-и йӑлтах
Шурӑ юр шуррине асӑма илеймесӗр.
Ҫав хӗле астӑватӑп, паллах...
Иртнӗ кун йӳҫҫинчен мӗн упратӑн халь
эсӗ?

Халлӗхе эп никамӑн та мар.
(Нихӑҫан та, ниҫта та, никамӑн та
пулмӑп)
Эсӗ тар ман патран, эсӗ тар!
Чи ачаш куллӑмпа унчченех эп йӑл кулнӑ.

Ҫӗр каҫасчӗ пӗччен чӑтлӑхра,
Тен, ун чух ыйхӑри вӑрмана ӑнланаттӑм.
Мана тӑвӑр кун пек хӑтлӑхра!
Илсе кай... Эп пыратӑп санпа... тамӑка та...

*1991 ç.*

* * *

Эс килес сукмак ытла та ансăр,
Тĕм ĕшеннĕн путнă ыйăха.
Хĕвеле кĕтсе илетĕп сансăр,
Сансăрах ăсатрăм уйăха.

Кун килет те çĕр килет — ылмашлă.
Санпала та, сансăр та çапла.
Эп пĕлетĕп, эс — кунпа юлташлă,
Эп çĕрпе юлташлă пуль апла.

Шăпчăксем шăнса сасне çухатнă.
Тен, пăрланĕ çăл та çĕр каçа.
Юриех такам килсе тухатнăн —
Каç куна тытасшăн, кун — каçа...

*1990 ç.*

* * *

Тем çинчен, тем çинчен те калаçăттăм
эпĕ санпа —
Ахаль çеç куçунтан тинкерме те май çук.
Çуркунне те çӳретĕн такам кӳрентернĕ
сăнпа,
Çăмăлттай çил ачи пек — пулман калаçу.

Ман каяс-им таçта улах ту тăррисем
шырама,
Макăрма ят хуман чечексен мĕлкинче?
Ассăрла йăл кулса ăнсăртран хам сăна
паллама
Тӳпе евĕр çавра кӳлĕсен куçĕнче?

Тем çинчен, тем çинчен те калаçăттăм
эпĕ санпа.
Нихăçан туйăнман сисĕм-туйăм çинчен.
Эп хаваслă асамçă пулайăттăм кăмăлăмпа,
Кăчăр-кăчăр шăнпа тек çӳремĕн пĕччен.

*1991 ç.*



* * *

Лěпсěр пуçне уснă çулçă сарнă хурăн.
Ним пулман пек сулхăн...
ним пулман пек — çил...
Юриех паян та ăнсăртран эс курăн,
Юриех паян та систермесěр кил.

Сан ялан (тен, маншăн) пěр манерлě кулă.
Кулă мар, пěлетěп, кулнă пек туни.
Хальхинче те сансăр пěр сăмахсăр юлăп.
Аллăмра — шур тěклě кукшапуç туни.

Çил килсе чӳхенě — вěлтěр вěçě мамăк,
Ассăн сывласан та тăкăнě шурри.
Нихăçан та пулмě—халиччен пулман-тăк—
Эсě маншăн пур пек — саншăн эп пурри.

Сан ялан (тен, маншăн) пěр манерлě кулă.
Анланман пек пăхăп, тăвăп курманçи.
Лěпсěр пуçне уснă çулçă сарнă вулă,
Ним пулман пек сулхăн...
ним пулман пек — çил...

*1991 ç.*

* * *

Чĕмсĕр пулнăшăн кĕçĕр мана ан кӳрен,
Эс умра тăниех, тен, мантарчĕ сасса.
Çеремри сар чечек куç хупать пуль хуллен,
Ққăвак куçлă каçран шăппăн çеç вăтанса.

Тавçăрайăн-и çĕнĕ каçсен шухăшне?
Чӳрече сиввине чăрсăр çил чуптăвать.
Таврара çуркунне симĕсленнĕ чухне
Типнĕ çулçă çулпа макăрас пек чупать.

Чӳрече. Ққăн-кăвак... Сан ыйтуллă сассу...
Ачалла кулăпа çĕнĕ каç çывăрать.
. . . . . . . . . . . . . . .
Темшĕн каç халь пире иккĕн çеç хăварать.

*1991 ç.*

* * *

Мĕншĕн чĕтренчĕк темрен хӳтĕленнĕ турат?
Мĕншĕн эп—пурнăç хавас пек—салхуллă?
Ёнерхиллех—кулас мар теекен çеç кулать.
Ёнерхиллех — кулăнмарĕ ман кулă.

Манăн салхулăх — тĕнче темĕн вăрттăн
кĕтни.
Вăрттăнлăха кăшт сисме те аван-мĕн.
Маншăн çавах кам мана савнипе савманни.
Пурпĕр паян пĕр сăмах та каланмĕ.

Ма ĕмĕлкӳ карă витĕр кичем курăнать?..
Çумăр килет... Пĕр сăмах çеç калас-и?
Çумăр — хăй йĕнĕ чухне çеç (ĕнен...)
пурăнать.
Унăн апла пурăнма юрамасть-им?

*1991 ç.*

* * *

Ҫайрӑн-им, ҫумӑр,
кайрӑн-им
таҫта — ҫума?..
Ун чух пулни
таврӑнмӗ
манпах юлма.

Вилнӗ хумсен
юхӑмӗ
суять тӑна.
«Сӳннӗ тесеччӗ —
юлнӑ-мӗн.
Ҫӑштах кӑна.»

Сӳннӗ тесеччӗ —
Юлнӑ-мӗн...
Паллах, паллах!
Халь пурӑнатпӑр.
Улӗм-и?—
Шӑппӑн кӑна...

*1991 ç.*

* * *

Тирексем пĕр каварлăн суясшăн мана:
Хĕвел витĕр çăвать хĕллехи пек шур
мамăк,
Çил ачи çилленни — куç курми тăмана...
Йывăççен ултавне ăнланать-мĕн çанталăк.
Çил ачи, аптраса, ăс çухатнăн çÿрет,
Çул çинчи мĕлкене хăпăтас пек лăскарĕ.
Эп туйман та, ума тăлăх çулçă ÿкет,
Ун çинче — виç сăмах:
«...юрату иртсе кайрĕ...»
Шурă пĕлĕт шурри те шумасть мал енче.
Шурă мамăк купи шухăш евĕр саланчĕ.
...Ман кашни туйăма парăнсассăн тĕнче,
Вăрахланĕ хумсен кăпăк сÿннĕ саманчĕ,
Шăнкăрчла шăхăрса савăнтарĕ сăпса,
Ахрашка шывсикки те çулне улăштарĕ.
Улмуççи, улмине шăпăр-шăпăр тăкса,
Çурăлан çеçкине çумăрпа уçăлтарĕ.
Ман кашни туйăма пăхăнмасть çав тĕнче.
Унăн хăйĕн йĕрки, унăн хăйĕн пур ирĕк.
Ман пекех, тен, çÿретĕн «тăман» айĕнче,
Çак телей те çитет: шур тăман халĕ —
пирĕн.

*1991 ç.*

* * *

Ман телей — саншăн нимĕн те мар,
Санăн — маншăн, тен, нимĕн те мар.
Пăхса ил те — хуллен иртсе кай,
Эп çеçке вĕçтерем çиле май.

Мĕн çӳретĕн шăнса сивĕре?
Эп? Савап ĕнтĕркенĕ кĕре.
Сан сăнна асилмешкĕн кăна.
Урамра иртерем çак куна.

Пăхса ил те — хуллен иртсе кай,
Эп çеçке вĕçтерем çиле май.
Анлансассăн — ăнлан хăвăнла:
Шăп çӳрем çак кĕрхи çулçăлла.

*1991 ç.*

* * *

Эп кӗтмен: ӑшӑтать е лӑскать ҫил сада
Мӗн аван — тен, йӑлтах пулса иртнӗ ӗнер.
Эсӗ вӑйлӑ, эппин, тытса чар вӑхӑта!
Чӗмсӗрсен вӑййинче вӑрахрах киленер.

Тунсӑхсем, хурлӑхсем ман миҫе-ши тата,
Миҫешне тиркесе, миҫешне савмалла?..
Ӗмӗтри ӗмӗтсем килес ҫук ман пата,
Пурӑнас-тӑк — вӗсен ӗмӗтрех юлмалла.

Пӗтӗм вӑрттӑнлӑх пурнӑҫшӑн ӑнсӑртлӑх-им?
Пӗтӗм вӑрттӑнлӑх — сас черетленӗвӗнче...
Тытса чар вӑхӑта! Вӑхӑт чарӑнчӗ... Чим!
Хушӑран этеме те тӑнлать-мӗн тӗнче.

*1991 ҫ.*

* * *

Эсӗ çук. Пултӑрин. Пӗчченех киленем:
Икӗ тӗслӗ тӳпе — хӑйне уйрӑм çанталӑк.
Мӗн пурри пӗтӗмпех—хурланса савӑнмалӑх,
Пӗтӗмпех — тин кӑна асӑрханӑ илем.

Ёненеймӗп текех тӗлӗксен ултавне —
Манпа пурнӑç ултавӗ ытла та юлташлӑ.
Хӑш чухне сансӑрах калама çук хаваслӑ,
Эп пӗлмен савӑк мар телейсен сӑлтавне.

Чӗрне вӗççӗн тӑрса темле кайӑк юрлать,
Темле йывӑç çулçи чӗтренет
вӗттӗн-вӗттӗн.
Паянхи çӗр темме çырмари пек сӗм тӗттӗм.
Ятсӑр кайӑк, ман пек, телейне, тен,
хурлать.

Нихӑçан пирчемен асап çеç сӑвӑça
Юратма вӗрентет ырлӑхри пурнӑça.

*1991 ç.*

* * *

Юрататăп пулсан
Пăшăлтататтăм эп:
«Ҫай...»
Утса кайăттăм хам
Ҫиле хирĕç те мар —
Май!
«Ҫӳлĕри уйăха
Илсе пар-ха» тесе
Мар,
Ҫалăп эп: «Авăра
Путарар-и шуçă —
Ма?
(Юрататăп пулсан,
Эп —
Сан...)

*1991 ç.*

* * *

Çунасси —çунать,
Сӳнесси — сӳнет.
Мĕн тĕлĕнес-ха усăсăр?
Кур, тӳпе кулать.
Юр — ӳксе ӳлет:
Пылчăк çăрса та утăпăр.

Кăлăхах кĕтни.
Мĕн чĕнес — ахаль.
Кăмăл йĕме пуçтараннă.
Тунсăху патне,
Вăрттăн шăплăха,
Çулçăлăх витĕр кайрăнам?

Çунасси — çунать,
Сӳнесси — сӳнет...
Сăнăм кăна йӳçенкĕччĕ:
Çулçă ал сулать,
Ал сулать — ӳкет.
Куçрĕ чуна çӳçенчĕкĕ.

*1991 ç.*

* * *

Кӗтменлӗх-им эсӗ е кӗтнӗ сана
Тӑманлӑ каҫ витӗр чечексӗр шур улӑх?
Эс килтӗн те — сассӑр — каларӑн мана:
«Эп саншӑн пӗр харӑс пур савӑнӑҫ пулӑп».

Хӗлле-и, ҫулла-и — пӗлмерӗм мӗнне,
Кӗрхи те, ҫурхи те арпашрӗ сасартӑк.
Ку пач урӑх ятлӑ тӗнче иккенне
Ирсемсӗр, кунсемсӗр, каҫсемсӗр ӑнкартӑм.

*1991 ҫ.*

* * *

Куç
хупăп та —
итлĕп.
Эс
кил те —
калаç.
Хуп-хура
çӳçлĕ
ача пек
каç...

*1991 ç.*

* * *

Çак тĕнчерех такамăн терчĕ,
Такам — хаваслă, ахăртне.
Улмалăх тăкрĕ те пĕтерчĕ —
Хĕле кĕрес чух — улмине.

Ķаллех туятăп — кĕвĕç евĕр,
Варли шанман пек варлине —
Кĕр кунĕн кăмăлсăр пуплевĕ
Пĕр маншăн çеç те маррине.

Ĕшентĕн пуль, кĕр, каçăн-ирĕн
Ман кăмăла сыхла-сыхла.
Пăхар та иккĕн хире-хирĕç
Сĕм кантăк витĕр — тунсăхлар.

Йĕрсен-йĕрсен, куççуль те типĕ,
Ķулсассăн, кулă типĕ... Ķул!
Таçта пĕрремĕш юр пĕрчи пек
Çуралчĕ çĕнĕ юрату.

*1991 ç.*

* * *

Çĕн юр çинче — сар çулçă сывăрни.
Çак саманта сăмах чĕнсе варламăпăр.
Мĕнех вăл — эп айваннăн йăл кулни...
Çук, çук, кăна халь пĕр-пĕрне каламăпăр.

Çĕн юр çинче — сар çулçă сывăрни...
Черчен кĕртсем—ир килнĕ хĕл пуçламăшĕ.
Хыр йĕпписем те вăхăтсăр хăрни
Çинчен калас пек — шăпăрт хĕвеланăçĕ.

Темме хĕл кунĕ асăма килет.
Хам хĕл кунне — кĕтес мартан —
кĕтсессĕн те.
Эс пăх-ха, çулçă чĕтренсе йĕрет,
Кąç — вилнĕ кĕр сăнне курса
юласшăн пек...

*1991 ç.*

* * *

Шăннă та — сивĕ,
Чĕмсĕр,
Витĕр курнассăн каç.
Шухăшăм çил пек —
Тĕлсĕр,
Çил — йĕрсе янă сас.

Қамăн мĕскер
Ыратĕ —
Сан ыратсассăн чун?
Çил сар çулçа
Татать-и?
Таттăр-и — тарнă çу.

Қам сывăрмасть-ши,
ВĂЛ-тăр?—
Мансăр çĕрлет çĕре.
Яр! ярăнать те
Çăлтăр —
Йăлтăр! ӳкет çĕре.

*1991 ç.*

* * *

Вĕсем мана саватчĕç.
Эп — вĕсене.
(Тăвăл татса пĕтерчĕ
çулçăсене),
Пурччĕ чунра хаваслăх —
Çĕтрĕ (самант!!!)
(Тăлăх тĕме шеллевсĕр
тăвăл авать).
Савнă вĕт, савнă, савнă...
Иртнĕ йăлтах!
Асаилӳ çеç шуххăн
вилчĕ шалта.

*1991 ç.*

* * *

Ёненетне, таçта чечексем чĕрĕлеççĕ,
Ёненетне, çăваççĕ кăвак çумăрсем.
Пӳлĕмри çеçкесем сивĕпе пĕрĕнеççĕ,
Эс кичеммĕн вулатăн кичем сăвăсем.

Урамра ӳсĕр юр ӳккелет ӳкĕнӳсĕр.
Чечексем чĕрĕлни... Ёненес те килмест.
Пĕр-пĕр çăлтăр çинче йĕпсĕр роза та ӳсĕ,
Татайми çеçкене татса парăн-и эс?

Тĕссĕр юр пĕрчисем арăш-пирĕш вĕçеççĕ,
Ан вула килентермĕш кичем сăвăсем.
Тен, чăнах та таçта чечексем чĕрĕлеççĕ,
Тен, чăнах та çăваççĕ кăвак çумăрсем...

*1991 ç.*



* * *

Хурлăхпа хуралнă, савнăçпа — саланнă...
Мĕн тесе каласшăн — пĕтнĕ калаçса.
Паянтан хĕвел те сивĕтме пуçланă,
Аслати сасси те çиçĕм пек таçта.

Пурнăç пур-тăр, пур-тăр.
Иккĕленчĕк мар эп:
Çил ачи сывлать пек... Темĕн ыратать...
Тунсăхпа вилмен-шим йывăççен тымарĕ? —
Куçăм хĕрхенет пек йĕрмĕш турата.

Хурлăхпа — хуралнă, савнăçпа — саланнă...
Кĕр сăнне вăрлар та пурăнар тату.
Пулнă. Пулнă, çуннă!.. Сӳннĕ—сапаланнă,
Пур пулса курасшăн çуннă юрату.

*1991 ç.*

* * *

Тӗл пулса пӗр чӗнми калаҫма
Май килессӗн сунманччӗ те тек.
Алӑ пар юлташна юлташла,
Савнилле алӑ парӑп халь эп.

Пурнӑҫла юлашки ыйтӑва
(Ан тинкер уйрӑласшӑн мар пек):
Кӑчкине ҫурайман-ха хӑва,
Парнеле мана хӑрнӑ чечек.

Манса кай эс куҫҫуль пуррине!
Тӗнчере эпир ҫеҫ санпала
Пӗр чӗнми калаҫма пӗлнине
Нихӑҫан... никама... ан кала...

*1991 ҫ.*

* * *

Эс манса кай ман сасса.
Ҫантӑкран ӑшӑ варкӑш кӗрсен —
Ку ыран ҫуркунне пуласса.

Эс манса кай ман сасса.
Ҫывӑх юрӑ ҫемми илтӗнсен —
Иртнӗ кун иртнинех юласса.

Эс манса кай ман сасса.
Вӑл санра манӑҫма пӗлмесен —
Эп сана ҫӗнӗрен савасса.

Манса кай, манса кай ман сасса...

*1991 ç.*

* * *

Çуркунне те юр çăвать-мĕн,
Симĕс курăк çийĕн — юр.
Çуркунне те юр çăвать-мĕн...
Темĕнле ĕлккенлĕх пур.

Ывăçа тăсса тăрам-и?
Кулăшла-и?— Кул, эппин.
Ывăçра — куççуль тумламĕ,
Юр куççулĕн йăлтăркки.

Макăрать мăнтарăн кантăк,
Чĕрере шеллев юлать...
Айванмарлăхшăн саван-тăк,
Айваннишĕн те юрат.

*1991 ç.*

* * *

Тӳсмелле мар шăпăрт шăплăх.
Урамра — çав çуркуннех.
Эс кайсан çухалнă хăтлăх
Ĕнтĕ таврăнмĕ тинех.

Ҫаррăма çу çилĕ картăр,
Уйăх тартăр кантăкран.
Эп кăна телейсĕр мар-тăр,
Ҫаç телейсĕр, тен, манран.

Кĕтнипе ĕшеннĕ кăмăл...
Ырнă ыйхăллă тумлам...
Эс тултах пĕччен çĕ тăнăн
Чӳрече умне хутлам.

Куç хупса тăрам пĕр авăк,
Сан сăнна манса тăрам.
Пĕр хавассăр иртнĕ талăк
Ĕнере юлать аран.

*1991 ç.*

* * *

Қаçарнӑ çылӑх пек сана савни.
Сывпуллашма манни нимех те мар-тӑр.
Çурхи тӑман йывӑççене авни
Ан курӑнтӑр тесе эп карӑ картӑм.

Қаçарнӑ çылӑх пек сана савни.
Лӑплантӑм, кӗтмӗп тек, саваймӑп ӳлӗм...
Мӗнне пӗлмесӗрех теме шанни
Йӑлт манӑçрӗ çак уйӑхсӑр каçкӳлӗм.

Қаçарнӑ çылӑх пек сана савни.
Хам тӳснӗ асапран хамах кулам-и?
Эс ман çинчен аса илме манни —
Савман пекех — ахаллӗхе ӑсанӗ.

Қаçарнӑ çылӑх пек сана савни...

*1991 ç.*

* * *

Манса кайнă иккен туйăмсем — вăранма,
Куçăмсем йăл кулма манса кайнă иккен.
Сывпуллашнă пек шăп сулкала та ална,
Сулхăнрах çеç кулса кăтартайăп-и, тен.

Чи ахаль сăмахсем шутласа кăларам
Чи ахаль кăмăлпа сан çинчен калаçма.
Санпа ман хушăра — кун çутисĕр урам,
Санпа ман хушăра — чĕнтĕрсемсĕр каçма.

Кĕрсерен саралсах сарăлать вĕрене,
Шухă çил шуйхатать çулçăсен шăплăхне.
Эп паян çĕрĕпе куççульпех хĕрхенем
Тĕттĕмри çутăсен тăлăхкăмăллăхне.

*1991 ç.*

* * *

Эс çуккине ăнланнă эп, ăнланнă.
Ăнланнă та шăпланнă юнтарса.
Çĕр хĕрринче тĕнче пĕтме пуçланăн
Хĕвел çурри выртать юн юхтарса.

Çырма юххи тăп чарăннă та тăнă.
Çил хальхинче ытла та йăпăлти.
Ахаль те манăн çĕмĕрĕлчĕк кăмăл
Черченмарланĕ-и вара халь тин?

Шăплан, тăман, ытмастăп эпĕ ним те.
Мана никам та, ним те кирлĕ мар.
Ман сассăма пĕчченлĕхĕм çеç илтĕ,
Пĕчченлĕхĕм вĕрентĕ... çук пулма.

*1991 ç.*

* * *

Ҫилтӗрин. Пӑхтӑрин. Ҫултӑрин.
Маншӑн пурте — никам та, нихҫан та...
Йывӑҫсен тӗттӗм симӗс сӑрри...
Ҫумӑрпа исленес пек пӑлхантӑм.

Мӗн ҫинчен калаҫас ман санпа?
Туйӑма урӑх канлӗх вӑрланӑ.
Ҫӗркунне иртсе кайнӑранпа
Улшӑнман-тӑр эп шӑп та ҫулталӑк.

Ҫумӑр ҫеҫ сас тӑвать пӗр кана...
Пурнӑҫ хӑй ҫывӑх тантӑш пуласшӑн
Килӗшме тӑрӑшать пек мана —
Эп хавас паянхи кашни сасшӑн.

Ёнтӗ ҫу, симӗс ҫумӑр, ҫӑвах,
Ҫывхартса сар йӗпхӳ пӗлӗтне,
Ырнӑ-йӑлӑхнӑ симӗс хӑва
Ман пекех, тен, кӗтет кӗр тертне.

*1991 ҫ.*

* * *

Ман вӑй та — вӑйсӑрлӑх пулсан,
Ҫаҫарайми ачаш-им эпӗ?
Аса илтер хавас туса,
Аса илсен — кулма пӗлетӗп.

Куҫ ӑшшинче — каҫсен сивви,
Каҫ сиввинче—куҫсем—хӗлхемшӗн.
Ҫумин-и ҫумӑр е — ҫӑвин!—
Ҫил — ҫумӑра кӑна!— ҫилленчӗ.

Йӗпхӳ, ҫук — ҫумӑр, пӑр. Тӑман!
Савас килни — шеллев: пӗр ҫакӑ.
Эп — намӑс пулнине туйма —
Тӗм ӗмӗлки ҫине пусатӑп.

*1992 ç.*

* * *

Çак саслах пулнă çумăр çуни,
Çак тĕслех пулнă, ахăр, хĕлле.
Хăçантан сар чечекĕн туни
Çаралать кĕр вĕçленнĕ тĕле?

Хăçантан пурăнать уйрăлу?
Ма хăш чух кун çути те хура?
Аран çеç хускалать те куллу,
Қалаçас килмен евĕр тăран.

Хĕл туймасть чунсенчи асапа —
Юр çине çумăр шăппăн çăвать.
Унăн хăйĕн — пăлхавлă шăпа,
Ыратни те, савни те — çавах...

*1992 ç.*

* * *

Ман нимĕн те калас килмест.
Ҭĕнче кĕтмен те — ман валли-им?
Вăл мар, вăл мар ăнланĕ — эс!
Пĕр эсĕ çеç — вилсен те! — килĕн.

Йĕрес килни чĕтрет шалта.
Теме сисни — куççуль сăлтавĕ.
Сăмахсăр юлнă саманта
Ҫуçа хупса тӳсни — ултав-и?

Ман нимĕн те калас килмест.
Ҫалассине каплах каланӑ.
Салхун кăна кулса илме —
Эс килĕн те — хал пур-ха манăн.

*1992 ç.*

* * *

Çурма тĕттĕм хăтлăхчĕ пĕр хушă!
Çурма тĕттĕм шăплăхчĕ кăштах!
Вĕренен турачĕ мĕншĕн хуçăк,
Хĕл каçайнă çулçисем ăçта?

Çутçанталăк тĕппипех çырлахнă—
Çак тĕнче хăй пысăкăш кăна!
Ассăрла юратнăн та — пăрахнăн—
Нимсĕрех юлатăп пĕр кана.

Шурă юр-им çакă, юр анчах-и?
Ирĕлет те шыв пулса юхать...
Хĕлĕн кăмăлĕ, çемми, сăмахĕ
Асăмра çеç хурланса юлать.

*1992 ç.*

* * *

Ан ютшăн — туршăн та!— ан ютшăн,
Эпир, юратнă-тăк, ют мар.
Хуркайăксем — шап-шурă ушкăн,
Шутне пĕлеймĕн — ан шутла.

Пулин, ара: шап-шурă, шурă...
Хумсемсĕр кӳлĕ — хуп-хура.
Пăшăлтатса илет те курăк,
Авкаланса илет турат.

Иртни — юлать-тĕр, пур-ха ĕмĕт —
Вĕçет çĕмрен пек çĕмĕрсе.
Савăнасси — пĕртен-пĕр ĕмĕр,
Тертленесси те...— ĕмĕр çеç.

*1992 ç.*

* * *

Тен, сукмак та — анлă.
Тен, мăн çул та — ансăр...
Япăххи те пулнă, лайăххи те сансăр.

Ир — ӳксе йӗмелӗх, каç — каçса каймалăх.
Савăнăç та хуйхă — талăк хыççăн талăк.

Тӗпӗр-тӗпӗр саслă тӗлсӗр ир те каçшăн
Мӗншӗн шухă кăмăл халӗ хуçăласшăн?

Эп мӗне ӗненӗп, çутă хӗвеле-и?—
Пӗр енчен хуралӗ, тепринчен хӗрелӗ.

Япăххи те пулӗ, лайăххи те халӗ,
Çăлтăр йăлтăр! Ӳкӗ — ӳкӗ те çухалӗ.

*1992 ç.*

# Хум пăшăлтатăвĕ

*   *   *

Вăхăт вĕçет пит шуххăн.
Пурнăç çапла-тăр, эппин.
Вăл — карăнтарнă ухă,
Эп — ун вĕçтернĕ йĕппи.

Эх, ăнланса-и пĕтĕн
Çак çут тĕнчен меслетне.
Ăнсăрт телей те кĕтĕн
Пурнăç арпашнă чухне.

Вĕççĕр юхать, юхать шыв,
Çырĕ юлать ик енче.
Хумĕ — иртен самант-ши,
Икĕ çыранĕ — тĕнче.

Вăхăт вĕçет пит шуххăн,
Эп ӳкĕнессĕм-мĕн çук,
Эп ӳкĕтлессĕм-мĕн çук.
Вăхăт вĕçет пит шуххăн:
Авăн, юпа та чӳк.
Пурччĕ кĕр кунĕ—халь çук...

*1989 ç.*

* * *

Эй, çут тӗнче!
Сана çутă пулнишӗн саватăп,
Çӗрпе кун ылмашнишӗн... Хăратăп —
Каç сӗмӗнчен.

Вилӗм пекех
Вăл хура, лăпăс-лапăс тумтирлӗ.
Хăй патнех йыхăрать пурнăç ирӗ,
Çутă, килех!

Пурнăç — çӗршыв.
Пурнăçа юратсан — çӗршыва та.
Çӗршыва халаллам вӗççӗр ода —
Пурнăç тăршши...

*1989 ç.*

* * *

Çисĕм çиçрĕ —
Çăлтăр витĕр çулăм уçăлчĕ,
Уçăлчĕ те ялтăр çутăлчĕ.

Аçа çапрĕ —
Хурçăланнă кăмăл хуçăлчĕ,
Теветкеллĕ туйăм тусăнчĕ.

Çумăр çурĕ —
Хура хурлăх хухрĕ — сĕлкĕшрĕ,
Телей тĕрри тухрĕ — тĕлкĕшрĕ.

*1989 ç.*

* * *

Эп тинĕсрен тухмасан —
Савăн.
Эп пушартан тухмасан —
Савăн.
Пурпĕр эп ĕмĕр, ăнлан,
Санăн.
Эсĕ, тен, сисмĕш пулса,
Манăн...

*1990 ç.*

* * *

Шăннă кантăк çинче — тĕнче.
Çĕтрĕм ун ăшĕнче — пĕччен.
Вĕçсĕр çулăм инçе-инçе
Курăнать ту чĕрçи çинчен.

Аташатăп. Ăçта сынсем?
Сас памаççĕ ту хырçисем.
Эпĕ çеç тĕнчере пĕччен,
Тĕтреленнĕ уй варринче.

Шăпăрт... Куç умĕнче — тĕтре.
Пурнăç — катăлнă кантăк пек.
...Çиçĕм çиçрĕ! татах, тепре.
Çутăл, шанчăкăм ванчăкĕ!

*1989 ç.*

*   *   *

Пурнăç мĕнне курас мар —
Суккăр çуралăттăм.
Унăн сăнне туяс мар —
Чунсăр çуралăттăм.
Çак тĕнчене тав тăвам
Туйăм пилленĕшĕн.
Эп вутăшпа пĕртăван —
Тинĕс киленĕçĕ.
Ятăм ман — кăпăк пики,
Шыв йăлтăртатăвĕ.
Тусăм, калассăм пекки —
Хум пăшăлтатăвĕ.

*1990 ç.*

* * *

Пулас килет ман ятсăр хĕрача,
Эс хирĕç пул та ят хурса паллаш.
Телейлĕ тĕлĕк пек сассу ачаш,
Паллашрăн-тăк, калаç манпа, калаç.

Калаç манпа çурхи илем çинчен,
Хĕлле те çеçпĕл шăршине туям.
Сана чунтан саватăп эп тесен,
Пĕрремĕш илтнĕ евĕр йăл кулам.

Эп тинĕспе — ят тăрăх — хурăнташ,
Çĕн ят хураймăн ĕнтĕ, ан паллаш,
Сассу пулаймĕ ыйхă пек ачаш,
Шăпах юлар, эс ним те ан калаç...

*1990 ç.*

* * *

Тӗкӗртен сӑна пӑхмастӑп,
Сапаланчӑклӑн кулса.
Ҫаруран чупса тухмастӑп
Санӑн уттуна туйса.

Эп хальччен савман уя та,
Ҫӗрлехи пӗччен уя...
Ан ӗнен мана — суятӑп!
Сивӗ куллӑм та — суя!

Ҡӑмӑла уҫса юрлас та —
Ҫӑлтӑр тӑкӑнӗ ҫӳлтен,
Юрату хӗвел пулас-тӑк —
Тинӗс тӗпӗ типӗ, тен.

Ҡаламан сӑмах каланмӗ.
Ҡалаймарӑм. Чӗнмӗп те.
Халӗ тин никам ӑнланмӗ
Тӑлӑх юлнӑ ӗмӗте.

*1990 ҫ.*

* * *

*М. С.*

Мĕн калаçан —
Суян вĕт.
Суян, суян...
Кĕр çулçисен
Вылявĕ —
Аран-аран.

Кайăкхурсен
Черечĕ...
Салхулăх çеç...
Кăмăл кăна
Хĕрхенчĕк,
Çемçе-çемçе.

Мĕн калаçан —
Суян вĕт.
Суян, суян.
«Чĕмсĕррисен
Ултавĕ
Таса паян...»

*1991 ç.*

* * *

Тем ăнланса илнĕ, темĕн ăнланман —
Шавласа илет те шăп тăрать вăрман.
Те хамах сив чунлă, те тĕнче кăра...
Юлашки чĕтрев-им ӳкнĕ çулçăра?

Те хамах ӳпкевлĕ, те тĕнче кăра.
Асăрханчăк çумăр хăраса тарать.
Мĕн юлать кĕтмелĕх — нимĕн-нимĕн те.
Сар сукмак чĕтревĕ пĕлтĕрхи тĕлте.

Пулнă — иртнĕ. (Юлнă! Юлнă-ха асра).
Малашне те шуçăм килмĕ анăçран.
Хĕл иртсе кайсассăн, ахăрмĕ тăман.
Тем ăнланса юлнă, темĕн ăнланман.

*1992 ç.*

* * *

Эп вĕçĕп. Вĕçĕп те аманăп.
Ахăлтатса кулать пек вилĕм.
Пулман та, çук та пек пĕр авăк
Сывлаймиех выртассăм килĕ.

Ултавăма суйни кăна ку.
Веçех — вĕçевĕм тĕрĕслевĕ.
Таçтан ман иртнĕ савăк, ахăр,
Ахрăмланса килет çил евĕр.

Кулас килет те — куллăм тарнă,
Пуш сассăм çеç пуласшăн кулă.
Сана мĕн чухлĕ ăнлантарнă:
Ӳксессĕн те — чĕп-чĕрĕ юлăп,
Вилсен — çĕр мар, эп тинĕс пулăп.

*1991 ç.*

* * *

Эс мана паянччен те пĕлмен.
Эс мана инçетрен уттăмран çеç палланă.
Куçăмри хĕм çинчен хушăран, тен,
калана́ -
Тинĕсе нихăçан та чĕнмен.

Тинĕсе нихăçан та чĕнмен.
Те хумсен тинĕсле çиллинчен кăшт хăранă,
Те мана вĕлтĕрти çăмăлттай пек шутланă,
Эпĕ куншăн ӳпкевлĕн йĕмен.

Эпĕ куншăн ӳпкевлĕн йĕмен.
Çумăр айĕн кăна чĕтренсе ĕсĕкленĕ,
Çил-тăман юррисен суранне те шелленĕ —
Ыттисем пек пулмашкăн пӳрмен.

Ыттисем пек пулмашкăн пӳрмен.
Эпĕ çиçĕм тĕсне ăссăрла кăмăлланă,
Аслати сассипе киленсе асапланнă.
Эс мана паянччен те пĕлмен...

*1991 ç.*



* * *

Хĕвелсĕр кун
тухмасть-им çăлтăр та
йăлтăртата-йăлтăртата?
Хĕвелсĕр кун...

Утас енче —
Пĕр çутă! Тĕттĕм, тĕттĕм...
Пĕр çутă пур-ха хуть тесеттĕм,
пурах — инçе.

Хĕвелсĕр кун
ытла та сăнсăр — нимсĕр.
Ҫашни вĕрен-пĕр йытă — килсĕр.
Тĕнчех-и ку?

Йĕре-мĕн çур.
Пур кун — çухатнă меллĕх,
ним ăнланмасăр çӳремелĕх
сăлтавăм пур.

*1991 ç.*

*   *   *

Мĕн пăсĕ кăмăла: хавас-и, терт-и?
Пĕлен пулсассăн — ним те ан кала.
Юр çунине сăмах чĕнми итлер те —
Çĕн çемĕ çĕклĕ кӳтнĕ кăмăла.

Телей çук? Ырлăх? Тӳсĕмлĕх вĕрентĕ:
Йăлтах — çак çураçусăр тĕнчере.
Чĕмсĕрлĕхре илем курма пĕлен-тĕк,
Савса пăрахăн çăрăлчăк кĕре.

Пуласлăха хама кура ят парăп,
Ыран пурришĕн савăп пурнăçа.
Мĕн туйнине кунтах... кунтах хăварăп:
Ĕмĕтĕме те шухă шухăша.

*1992 ç.*

* * *

«Паллаймастӑн-и мана, паллаймастӑн-и?
Ҫавраҫил юрри эп, шурӑ юр юрри...»

*Любовь Мартьянова*

Ҫук тӑман та, чечеклӗх те ҫук тӗнчере.
Мӗн пурри пӗтӗмпех — асап.
Юлашки этем евӗр вилес килменрен
Пурӑнас килнӗ пек — кулап.

Юлашки этем евӗр эп вилӗп пӗрех.
(Хыҫҫӑнхи? Эп ӑҫтан пӗлем...)
Маншӑн чи юлашки пек чи канлӗ ире
Хӳсе кайнӑ шап-шур хӗлле?..

Пӗтӗм Пур-лӑх асап. Тӑман мар, чечек мар.
Куҫӑма курӑнать юри.
Ҫавраҫил, ҫаврӑнах, кил, пӗрле ҫаврӑнар.
Ҫавраҫил! Шурӑ юр юрри...

*1991 ҫ.*

* * *

Тухăçран анăça юхса иртрĕ хĕвел.
Ир пекех, тен, каça та эп — кĕтнĕ?
Астуман та иккен — сарă çулçă çĕре
Вĕçсе ӳкрĕ пур савăнăç пĕтнĕн.

Ирĕкри вăштăр çил вăшт пытанчĕ таçта.
Вăл кăна кăмăла курса юлчĕ.
Сулхăнри шăплăхра ĕнтĕркенĕ тулта
Çӳçенсе сăр! чĕтренчĕ çулçă.

*1992 ç.*

* * *

Ун чухне йăлтăр кулнăччĕ сассăр,
Телейлехчĕ — самант — паçăр.
Шăплăха ăнланма пуçласассăн
Шăплăха улталать сасă.

Пуç çинчех — пĕлĕтсем — аслатишĕн!
(Хăмăр мар пĕлĕтсем — хăвăл).
Куçсене çатăр çеç хупассишĕн
Чулланать те хытать кăмăл.

Пĕлĕтсем — çиçĕмсен йăлтăрккишĕн!
(Пĕлĕтсем — хăмпăсем — тулнă).
Чечексем! Чечексем...— пĕчĕк-çеç-çĕ!—
Чуллă мар, чуллă мар — чунлă!

Пуç çинчех — пĕлĕтсем — аслатишĕн...
Пĕлĕтсем — çиçĕмсен йăлтăрккишĕн...

*1992 ç.*



7. М. Карягина.

* * *

Эп пулман кунта, ан макăр
Вăл та пурăннă тесе —
Сывлăша юратнă, ахăр...
Савнă (савнă!!!) çук тĕсе...

Эп пулман кунта — пулнах-тăк
Мĕншĕн ним те улшăнман?
Пурăннах пулсан, татах та
Пулас килмĕччĕ-им ман?

Эп пулман кунта — ĕненĕн:
Тăвăл та çаплах — кăра.
Çап-çавра тĕнчен пĕр енĕ
Хĕвеле çăтса ярать...

*1992 ç.*

* * *

Йывăçсем,
йывăçсен папкисем-пепкисем,
ан суях «çуркунне ку» тесе —
эпĕ кĕтĕттĕм ешĕл тĕсе.

Йывăçсем,
йывăçсен папкисем-пепкисем.
Эп утатăп теме тĕллесе,
тĕлленсе.

Йывăçсем,
йывăçсен папкисем-пепкисем.
Çак таран ма шăпланнă тĕнче —
тĕлĕнсе?

Йывăçсем...
Йывăçсен папкисем-пепкисем...

*1993 ç.*

* * *

Палланă арпашу —
палланă сасăсем —
палланă çемĕ ĕнĕревĕ...
Палан! Çырли хĕл сиввипе хĕллех хĕрелĕ...

Чӳречере —
асамлă эрешсем йĕрленчĕç пĕркунах,
хĕрӳ чĕре
ăнланаясшăн та — туять кăна ăна.

Палланă арпашу —
палланă сасăсем —
палланă çемĕ ĕнĕревĕ —
эп кунĕпе сас пĕрчисем пухса çӳрерĕм,

анчах... Анчах
ăш сăмахпа иртсе каять те эрлĕк,
мĕн пур — йăлтах —
çурăлайса çитмен çеçке манерлĕ...

Çурăлайса çитмен çеçке илемĕ евĕр —
палланă çемĕ ĕнĕревĕ —
евĕк.

*1994 ç.*

# ПИТӖР
## кӗввисем

* * *

Мĕнешкел ăссăрла Питĕрти çурçĕрсем.
Ыйхăланă тавра çурма ăшшăн кулать.
Чӳрече каррине асăрханнăн сирсе,
Манпа çеç калаçас пек пăлханнă хула.

Ним те чĕнмĕп каллех—эп сăмахсăр паян:
Юриех шăпланар шăплăха итлеме...
Хальхинче те çаплах тӳсĕм çитĕ-и сан
Иккĕленчĕклĕн çеç «Уйрăлар-и?..» теме?

Уйрăлар, уйрăлар... Пĕчченçи те çăтмах
Чĕтренсе сывлама, антăхса макăрма.
Ним туйман пек юлам, ĕнтĕ юрĕ, каях,
Тунсăхпа килентер тунсăхри урама.

Мĕнешкел ăссăрла Питĕрти çурçĕрсем!
Вăрттăн çил вăрттăн çеç чаршава сĕртĕнет.
Қантăкран йăпшăнса уйăх сăнĕ кĕрсен,
Юриех шăпланам шăплăха итлеме...

* * *

Хушăран пур тĕнче — йăлăнтарнă экран,
Чи юнтармăш сассем те халь темшĕн паха.
Енерхи куççульне манайман кантăкран
Сапаланчăк хĕвел ăшăтмасăр пăхать.

Хама хам ăнланасшăн çӳретĕп паян.
Хампа хам юлниех—тӳсмелле мар асап.
Эс ялан систермесĕр килен те каян,
Эп ... пĕлмен чĕнеймесĕр тăрса юласса.

Сассăрлантăм ятна асăна-асăна,
Тавçăраймăп, темле тĕлĕнтермĕш хăват...
Аслатисĕр те çиçĕмсĕр шăппăн кăна
Вĕтĕ çумăр тулта асăрханнăн çăвать...

* * *

Шĕмпĕлтик, шĕм-пĕл-тик —
каласăççĕ хумсем,
Пĕр-пĕрне итлесе, ачашланнăн выляççĕ.
Чăнкă мар çырансен юлашки чул картлаçĕ
Шур хумсен вăййипе пурăнать киленсе.

Манăн туйăм та çитмĕ çакна ăнланма —
Кунти сывлăш темме куç пăвас пек асамлă.
Инçетре-инçетре ешерет-им кăлканлăх —
Чĕмсĕркке канлĕхре куç хăех хупăнать.

Леш енче, тен, чăнах арăслан пурăнать.
Киленсе, тĕлĕнсе эпĕ ывăнтăм, ахăр.
Арăслан-и унта, аслати-и — тăнла-ха,
Леш енне вĕçтерер — пытанса хăрама...



* * *

Çакнашкал пăхиччен, куçна тарт айккине,
Çакнашкал ман çине урăххи те пăхать.
Шăннă тĕм йынăшать пĕшкĕне-пĕшкĕне,
Хум хума йыхăрать леш енчи улаха.

Шăппăн çеç çаврăнам та ларам çурăмпа,
Сăмахна парнелем туйăмсен ирĕкне.
Чул çыран калаçать пăшăлтн сасăпа,
Шур чарлан — шухăш пек —
вĕçтерет шур тĕкне.

Асăрха, асăрха, çавă шурă чарлан
Манни пек туйăмпах сывлăша юратать...
Ăнланман туйăма ăнланса ан чăрман,
Йышăнатăп: пĕрех çав чарлан та хăлат...

Тунсăхпа пуранса йăлăхмарăн-и эс?
Йăлăхтартăм пулсан — ăссăрла йăл кулар.
Ку чăнах та ытла тухатуллă кĕтес,
Ку чăнах та, ĕнен, ăрăмланă хула.

* * *

Çĕр çаврăнни те куçа курăнать.
Эс пăхнине ахалех халь сисетĕп.
Мĕншĕн эс, мĕншĕн пăрахрăн ăна —
Ӳкнĕ çеçке сив çилпе вĕлтĕртетĕ.

Вăйсăр эп: чи савакан сăмаха
Мантăм-шим—тек пĕр сăмах каланмарĕ.
Уйăх паян çаврака-çаврака,
Сывлăш халь-халь шĕвелсе кăвакарĕ.

Çав кӳлĕри мăшăр акăш туйне
Курнă-и эс е курмасăр та туйнă?
Тен, ку юмах, тухату? Тĕлĕнех.
Кĕçĕр мана çутçанталăк та суйнă.

* * *

Мĕн каласси куçра пулнишĕн
Ӳпкевĕм çук — ан айăпла.
Ҫасар пĕр туйăмсăр кулнишĕн,
Хăш чух ман кăмăлăм çапла,

Ҫуратăн-и, вылянчĕ сывлăш?
Туятăн-и, чĕтрет шăлан?
Ҫу каçипе кивелнĕ сырăш
Ҫĕç кайăк сассипе тулать.

Ҫĕр шăршине туятăп мар-и...
Ҫил çулçă вăййинче асать.
Ҫунта — сип-симĕс те сап-сарă,
Ҫунта халь — кăткăс та ансат...

*1991 ç., август*

# ТИНӖСПИ

*  *  *

Маринăсене халаллатăп

Юрччен — инçе,
ирччен — шăпах пĕр талăк.
Мăнтарăн, савăн-савăн:
чĕрем тапассăн туйăнать унччен!

Ĕмĕтсенче:
хĕлччен — шăпах çулталăк!
Ик ĕнтĕркенĕ аллăм
ик ĕнтĕркенĕ алă ăшшинче.

Епле çинçе
йĕрсем: тĕнче — савмалăх!—
куç илейми пăхмалăх!
Хĕвелшĕн пек тавралăх çав хĕлччен...

Çырлашăн пек çырлалăх сивĕччен...

* * *

Кашни каçах — кайма пуçтарăнни.
Тĕлĕксенче — чĕлтĕртетес пек сывлăш,
Çĕр çырлисем чалт пĕрхĕнес пек шывлă.
Çак тĕнчене савмасăр — кайрăн-и?

Кашни каçах — кайма пуçтарăнни.
Улах — кулах! — чунсем вылянă улăх.
Ку тăрăхсем тулли турат пек тулăх,
Сыпса пăхман сĕткен пек — савăнни.

Кашни каçах — кайма пуçтарăнни.
Тĕшне пĕлмен сар майăр ăшĕ!
Ку тăрăхра мăн тинĕссем те ăшăх,
Мĕн тарăнни — куç — авăр — тарăнни.

Çак таврана савсах — каятăн-им?
Ик тĕнчере пĕр-пĕчченех çӳретĕп.
Кĕрхи каççен куçа çиен йӳçекĕ —
Эп икĕ тĕнчере тăр пĕччении...

* * *

Шăп...
Шăп...ăрт...атса ярас пек çумăр.
Шăп...
Шăп... ăлтатинччĕ çулçă çулçăпа!
Çук! Пĕрех ман хамшăн шăпăрт мар
шăпа!
Шăп. Қанлех юлайтăр канлĕ чунăр.
Шăп...
Шăп... ам кăна хуллен утса çӳрет.
Шăнтса ярас пек сассăр çил вĕрет.
Шăп...
Ш...



* * *

Çумăр çурĕ, çурĕ...
Кĕркунне-и, çур-и —
Куçăм хупăнать...
Пулать!
(Йĕрекен — йĕрет,
Кулакан — кулать).
Пуласси пулать те —
Вăшт тăрса юлать.

*   *   *

Йӑлт ёнерхилле.
Çумӑр, юр, шевле...
(Эп сана...— кул-кул!—
ю-у...)
Пат.
Пат. Пат.
Улма тӑкӑнать.
Ентӗ сывӑ пул.
Юл...
Эп каям. Пӗччен.
Çумӑр кӳллинчи
Ман сӑнпа калаç,
юл-т-аш...
Асаилӳччен!
Çумӑр шӑниччен!
Маншӑн кӗр ӑшши.
Тумласен ташши —
ю...л...аш...ки...

* * *

Ҫашни ҫул —
Ҫӗнӗ ҫул.
Ҫивви —
ҫук!

Ҫӗввӗмсем!
Ҫӗмӗртсен
кӗвви —
ҫуп —

кам! Ҫала,
кунталла
килет
тет?

Эс кунта
сывлăш та
илсе
кил...

* * *

Чĕнместĕн. Ҫала
кăмăла
май:

Аван, те, кунта,
куллунта —
чан!

Ҫуҫу — (шĕл-кăвар!) —
хăвăн мар,
ман!

Чĕнместĕн... Ҫала
кăмăла
май.

«Тута — чуптума;
Чӳк тума
мар...»

* * *

Утравĕ мĕнле!
Мĕн пысăкăш тинĕс!
Вĕрмерĕ пуль çилĕ
Çыран еннелле...

Марина! Çиллес
Вĕç-хĕрсĕр çак тинĕс.
Сассем вĕçсе килĕç,
Темерĕн-им эс?

Хальччен асапран
Сассем, тен, хăтарнă
(Сассем, тен, хăварнă
Суран...)

Епле тилĕрет!
(Мĕн пысăкăш тинĕс!—
Мĕн пысăкăш çилĕ!)—
Лере... Лере...

* * *

Никам та пĕлмест:
Тӳпе — мĕн тĕслĕ.
Эп пурнăç çийĕн
Вĕçнĕ те вĕçнĕ...

Хĕвел анать те
Хĕвел тухать —
Эсĕ саваймăн
Ку тăрăха.

Элле, чĕлхесĕр —
Чĕнместĕн эс.
Эпĕ — туятăп!
Мĕншĕн илтес...

Эсĕ чĕлхесĕр —
Пур эсĕ, пур!!!
Ӳпкелешӳсĕр
Ӳкет пек юр...

* * *

Çумăр çăвĕ-çăвĕ-çăвĕ те — чарăнĕ.
Эс мана каллех килме сăмах парăн-и?
Ку ман чи телейлĕ талăк-шим?.. Çакă-и?—
Уйăх та, ухмахланса, вăрттăн çакăнĕ!

Чи телейлĕ кунăм та...— темшĕн савăк эп:
Сан ятна та тĕрĕс мар, кутăн чĕнĕттĕм.
Тен, ку чи телейли мар — сисĕм талăкĕ,
Юрату керменĕ мар — ку ун çенĕкĕ?!

Куллунта чăнкăртатать хурлă савăнăç.
Калаçни юри сан, ирĕксĕр, тетĕн-и?
Малашне те йывăççем çилсĕр авăнĕç,
Тен, хуман кăвайтăн та тухĕ тĕтĕмĕ.

Пӳрне витĕр пăхăп та—шăппăн тунсăхлăп...
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Çумăр çăвĕ-çăвĕ-çăвĕ те — чарăнĕ...

*1991, 1994 çç.*

## Тупмалли

### Эс çук та — ним те çук...

«Шăпам санран тартать пулсассăн...» . . . 6
«Кил ман пата, чун савниçĕм...» . . . 7
«Инди фильмĕсенчи юрату асамне...» . . . 8
«Авăнать шур хурăн...» . . . 9
«Ман сăвва ăнланмастăн пулсан...» . . . 11
«Шутарса чӳрече каркăçне...» . . . 12
«Шурă хăйăрлă Атăл хĕрри...» . . . 14
«Шухăшласа кăлартăм пулĕ...» . . . 15
«Ан шыра мана — тупаймăн...» . . . 16
«Аран кунлатăп кун...» . . . 17
«Кичем...» . . . 18
«Сана кĕтни — тен, кĕтенçи пулни кăна...» . . . 19
«Çĕрпе пĕлĕт пĕрлешнĕ енне...» . . . 20
«Эс çук та — ним те çук: тĕтре, тĕтре...» . . . 21
«Шур уйăх шуратрĕ сăна...» . . . 22
«Асаплă-çке çак шăплăхшăн юрру...» . . . 23
«Пачах шел мар пулсан...» . . . 24
«Мĕне кура мана юратăн...» . . . 25
«Выля, выля, çилленчĕк çил...» . . . 26
«Хум чуптурĕ çыран хĕррине...» . . . 27
«Асап ан кӳр гитара хĕлĕхне...» . . . 28
«Ман сан валли пур урăх кулă...» . . . 29
«Паян — аван...» . . . 30
«Чĕтренчĕклĕ сассу ытла салху...» . . . 31
«Туйăнать кăна пуль, туйăнать кăна...» . . . 32

«Ҫай кунтан. Ытла асаплă...» . 33
«Ҫам пултăн эсĕ, хăш утравран...» 34
«Мана аса илсен...» . . . 36
«Маншăн ҫавах: эс килни, килменни...» . . . . . 37
«Ҫурма тĕттĕм пӳлĕм...» . . 38
«Ахальпа ахаль мар кунăмсен черетне...» . . . . 39
«Чӳрече пăрланнă...» . . . 41
«Ҫăвак кантăк куҫне йĕпетсе...» . 42
«Эс килес сукмак ытла та ансăр...» 43
«Тем ҫинчен — тем ҫинчен те калаҫăттăм...» . . . . 44
«Лĕпсĕр пуҫне уснă ҫулҫă сарнă хурăн...» . . . . . . 46
«Чĕмсĕр пулнăшăн кĕҫĕр мана ан кӳрен...» . . . . . 47
«Мĕншĕн чĕтренчĕк темрен хӳтĕленнĕ турат...» . . . . 48
«Ҫайрăн-им, ҫумăр...» . . . 49
«Тирексем пĕр каварлăн суясшăн мана...» . . . . 50
«Ман телей — саншăн нимĕн те мар...» . . . . . 51
«Эп кĕтмен: ăшăтать е лăскать ҫил сада...» . . . . 52
«Эсĕ ҫук. Пултăрин...» . . 53
«Юрататăп пулсан...» . . 54
«Ҫунасси — ҫунать...» . . 55
«Кĕтменлĕх-им эсĕ е кĕтнĕ сана...» 56
«Ҫуҫ хупăп та — итлĕп...» . . 57
«Ҫак тĕнчерех такамăн терчĕ...» 58

«Ҫӗн юр ҫинче — сар ҫулҫӑ ҫывӑрни...» . . . . . . 59
«Шӑннӑ та — сивӗ, чӗмсӗр...» . . 60
«Вӗсем мана саватчӗҫ...» . . 61
«Ёненетне, таҫта чечексем чӗрӗлеҫҫӗ...» . . . . . 62
«Хурлӑхпа — хуралнӑ, савнӑҫпа — саланнӑ...» . . . . . . 64
«Тӗл пулса пӗр чӗнми каласма...». 65
«Эс манса кай ман сасса...» . . 66
«Ҫуркунне те юр ҫӑвать-мӗн...» 67
«Тӳсмелле мар шӑпӑрт шӑплӑх...» 68
«Ҫаҫарнӑ ҫылӑх пек сана савни...» 69
«Манса кайнӑ иккен туйӑмсем — вӑранма...» . . . . . 70
«Эс ҫуккине ӑнланнӑ эп, ӑнланнӑ...» 71
«Ҫилтӗрин. Пӑхтӑрин. Ҫултӑрин...» . 72
«Ман вӑй та — вӑйсӑрлӑх пулсан...» 73
«Ҫак саслах пулнӑ ҫумӑр ҫуни...» 74
«Ман нимӗн те калас килмест...» . 75
«Ҫурма тӗттӗм хӑтлӑхчӗ пӗр хушӑ...» 76
«Ан ютшӑн — туршӑн та! — ан ютшӑн...» . . . 77
«Тен, сукмак та — анлӑ...» . . 78

## Хум пӑшӑлтатӑвӗ

«Вӑхӑт вӗҫет пит шуххӑн...» . 80
«Эй, ҫут тӗнче...» . . . 81
«Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ...» . . . . 82
«Эп тинӗсрен тухмасан...» . . —
«Шӑннӑ кантӑк ҫинче — тӗнче...» . 83

«Пурнăç мĕнне курас мар...» . 84
«Пулас килет ман ятсăр хĕрача...» . 85
«Тĕкĕртен сăна пăхмастăп...» . . 86
«Мĕн калаçан — суян вĕт...» . . 87
«Тем ăнланса илнĕ, темĕн ăнланман...» . . . . . . . 88
«Эп вĕçĕп. Вĕçĕп те аманăп...» . 89
«Эс мана паянччен те пĕлмен...» . 90
«Хĕвелсĕр кун...» . . . 92
«Мĕн пăсĕ кăмăла...» . . . 93
«Çук тăман та, чечеклĕх те çук тĕнчере...» . . . . . 94
«Тухăçран анăçа юхса иртрĕ хĕвел...» . . . . . . . 95
«Ун чухне йăлтăр кулнăччĕ сассăр . 96
«Эп пулман кунта — ан макăр...» 98
«Йывăççем, йывăççен папкисем-пепкисем...» . . . . . 99
«Паллангă арпашу...» . . 100

## Питĕр кĕввисем

«Мĕнешкел ăссăрла Питĕрти çурçĕрсем...» . . . . . . 102
«Хушăран пур тĕнче — йăлăнтарнă экран...» . . . . . . 103
«Шĕмпĕлтик, шĕм-пĕл-тик — калаçаççĕ хумсем...» . . . . 104
«Çакнашкал пăхиччен, куçна тарт айккине...» . . . . . 106
«Çĕр çаврăнни те куçа курăнать...» 107
«Мĕн каласси куçра пулнишĕн...» . 108

**Тинĕспи**

«Юрччен — инçе...» . . . . 110
«Қашни каçах — кайма пуçтарăнни...» . . . . . 111
«Шăп... Шăп...ăрт...атса ярас пек çумăр...» . . . . . 112
«Çумăр çурĕ, çурĕ...» . . . 114
«Йăлт ĕнерхилле...» . . . 115
«Қашни çул — Çĕнĕ çул...» . . 116
«Чĕнместĕн. Қала кăмăла май...» . 117
«Утравĕ мĕнле...» . . . . 118
«Никам та пĕлмест...» . . 119
«Çумăр çăвĕ-çăвĕ-çăвĕ те — чарăнĕ...» . . . . . 120

Çак кĕнеке аяларах асăннă хуçалăхсем пулăшнипе пичетленсе тухма пултарчĕ:

Шупашкарти «Пирĕн кил» (Наш дом)— акционерлă общество. Тĕп директорĕ **Владимир Осипович Федоров.**

Патăрьел районĕнчи «Малалла» коллективлă хуçалăх. Председателĕ **Михаил Владимирович Петров.**

Шупашкарти «Ҫовалекс» пĕчĕк предприяти. Директорĕ **Александр Ванифатьевич Якушкин.**

Патăрьел районĕнчи Ленин ячĕллĕ агрофирма. Председателĕ **Алексей Григорьевич Хитров.**

Шупашкарти «Чувашэнергогаз» тулли мар яваплă юлташлăх. Тĕп директорĕ **Неиль Нижеметдинович Айнетдинов.**

Патăрьел районĕнчи «Первомайски» коллективлă хуçалăх. Председателĕ **Иван Алексеевич Дикин.**

«Ҫанашри аш-какай комбиначĕ» акционерлă общество. Тĕп директорĕ **Владимир Васильевич Жарков.**

«Патăрьелĕнчи сĕт-çу завочĕ» акционерлă общество. Директорĕ **Анатолий Васильевич Думилин.**

Ҫомсомольскинчи коллективлă строительство отрячĕ. Директорĕ **Александр Федорович Поргунов.**

Ҫанашри строительствăпа монтаж ĕҫĕсене тăвакан 541-мĕш номерлĕ пуйăс (СМП № 541). Тĕп директорĕ **Николай Евгеньевич Патылкин.**

Ҫомсомольскинчи «Тав» фирма. Директорĕ **Александр Петрович Ҫапитонов.**

*Ырă ĕҫĕршĕн чун-чĕререн тав тăватăп.*

**МАРИНА.**

**Марина Федоровна Карягина**

**ХУМ ПАШĂЛТАТĂВĔ**
**ШЁПОТ ВОЛН**

*Стихи*

На чувашском языке

Редактор *В. П. Тимаков*
Художник *Н. Г. Мордяков*
Художественный редактор *М. Д. Давлятшин*
Технический редактор *Л. К. Егорова*

Сдано в набор 24.08.95. Подписано к печати 21.11.95. Формат $70\times108^{1}/_{64}$. Бумага офсетная № 1. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,8. Усл. кр.-отт. 3,06. Учетно-изд. л. 3,2. Тираж 5000 экз. Заказ № 1667. Изд. № 9. Цена свободная. Малое предприятие «Булгар».



# ХУМ ПӐШӐЛТАТӐВĚ

*сăвăсем*